2023-2024-мĕш вĕренӳ çулĕ
Шкул шайĕнчи олимпиада
Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)
5 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 90 минут
Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумайййи 50 балл пухма пулать

1. Нумай пăнчă вырăнне панă сăмахсене тĕрĕс вырнаçтарса лартăр: *ăшă, сивĕ, кĕске, çумăр.* Кашни йăнăшшăн 1 балл чакармалла . Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.
а.Хĕвел пит пĕçертсе пăхсан ... пулать теççĕ.
ă.Курак кĕркунне ир кайсан хĕл … килет теççĕ.
б.Выльăх урисем вырăнĕнче юр ирĕлсен … пулать теççĕ.
в.Çуркунне вăрăм килсен кĕркунне … килет теççĕ.

2. Йăнăшсене тӳрлетĕр: *Йашка антарсан тирек тĕпĕ тарласан епе пулат теçĕ.*
Кашни йăнăшшăн 1 балл чакармалла. Пурĕ – 5 балл.

3. *Çĕр çырлипе хăмла çырли нумай пулсан тепĕр çулхине ыраш лайăх пулать.* Ӳсен тăран ячĕсене тупăр та вырăсла куçарăр. Пурĕ – 6 балл.

4. Чăваш чĕлхинче миçе падеж? Падеж ячĕсене çырăр. *Çăкăр* сăмаха вĕçлĕр. Кашни тĕрĕс хуравшăн 3 балл. Пĕтĕмпе – 9 балл.

5. Предложенисен чиккисене тупăр та чарăну палли лартса çырса илĕр.
*«Анчах ку çуна тинех ярăнма юрăхлă пулас çук ĕнтĕ ăна эпир лаçça кĕртсе хурăпăр вăл пирĕн ваттисене турттарса леçмелли çунашка пулĕ аннепе эсĕ ватăлсан та сире çак çунашка çине лартса хам килсе пăрахăп». ( Г.Волков çырнинчен).* Тĕрĕс çырнăшăн – 5 балл.

6. *«Катаччи, катаччи!*
*Катаччи çитрĕ, çу çитрĕ.*
*Катаччи тăвĕ турăмăр,*
*Мамăк шывĕ сапрăмăр…»*
Çак йĕркесене ачасем чăвашсен мĕнле йăла уявĕнче юрлаççĕ? Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

7. Петр Мажоровăн «Хăйма вăрри» калавĕнчи Таиç хăйма банкине мĕн пирки ӳкерсе çĕмĕрнĕ? Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.

8. *«Кушакăн шартлама хĕл варринче*
*Вутти пĕтсе çитет,*
*Выртасчĕ кăмака çинче,*
*Анчах сив кирпĕч хытă чĕпĕтет!»*
Çак йĕркесене мĕн ятлă произведенирен илнĕ? Авторĕ кам? Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

9. Хĕллехи уйăх ячĕсене çырăр. Тĕрĕс хуравшăн – 3 балл.

10. *Ĕçченуçыннаупĕрусăмахукахалуçыннауçĕрусăмах.* Кирлĕ мар сас паллине кăларса пăрахсан ваттисен сăмахĕ пулать. Мĕнле ваттисен сăмахĕ вуланать-ши? Тулли те тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.